Ф. П. Павлов Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗренекенсемпе. 1912—1913 ҫулсем.

✦

Ф. П. Павлов Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗренекен юлташӗсемпе.

Сулахайран сылтӑмалла: Ф. П. Павлов, М. П. Петров, И. С. Максимов-Кошкинский, М. М. Митрофанов.

1912 ҫул.



# Хветӗр Павлов ятне...

Иртсе пырӗҫ кунсем, иртсе пырӗҫ ҫулсем,
Йышлӑ пулӗҫ пирте чапа тухнӑ ҫынсем,
Анчах халӑх, Ҫӗршыв манас ҫук ӗмӗрне,
Манас ҫук ӗмӗрне Хветӗр Павлов ятне.

Чӗререх янӑраççӗ юрри-кӗввисем,
Ҫурхи ҫут хӗвелле шӑранса тухнисем:
«Йӗс таканлӑ», «Олту», «Вӗлле хурчӗ»,
«Сӗрен»...
Тӗлӗнен «Сӑрнайпа палнаяя» итлесен!

Юрӑççен, сӑвӑççен улӑпла ретӗнче,
Ывӑнмасӑр утан Ҫеҫпӗлсен йышӗнче,—
Сан яту тӳпери ҫӑлтӑр пек курӑнать,
Сан тупру Чӑвашъен чунӗнче пурӑнать.

Василий ДАВЫДОВ-АНАТРИ.